Уяв çапла иртрĕ

# Мирлĕ ĕç хуçи хисепе тивĕç

“Кам ĕçлет, ăна куçран шанчăклă пăхма пулать, унпа уявра та пĕр кĕрекере савăнма юрать”,– терĕ Строительсен кунĕнче хуçалăхсем хушшинчи “Моргаушская” строительство организацийĕнчи строительсен строительство организацийĕнче çирĕп йĕркере. Акă, уяв кун кăçал та пурăнмалли çĕнĕ çуртсем, ялсен социаллă пурнăçне улăштарма больницăсемпе шкулсем, пĕтĕмĕшле практика врачĕн офисĕсем тăвасси-



савăнăçлă пухăвĕнче район администрацийĕн пуçлăхĕ Юрий Александрович Иванов ĕçпе палăрнисене тав туса парнесем панă май.

Чăваш Республикинче Строительсен кунне уйрăмăн паллă тума пуçланăранпа кăçал 50 çул çитрĕ. Çакă та пĕр хăйсемшĕн çеç пурăнманнисемшĕн хăйне евĕр уяв. Строительсене вара малашлăхпа ĕçлекенсем темелле. Ахальтен-и вĕсене мирлĕ ĕç хуçисем теççĕ. Теççĕ те, пурнăçланă ĕçшĕн тивĕçлипе чысласçĕ. Çак йĕрке “Моргаушская” пе, хăтлă магазинсем пурнăçа кĕртессипе тата вĕсене юсаса тăрассипе палăрнă строительсем тĕрлĕ шайри Хисеп грамотисене тивĕçрĕç (сӳлти сăн ӳкерчĕкре). Тĕрĕс калать район пуçлăхĕ: ĕçлекенĕн ĕçĕ те пур, чыс-хисепĕ те çумрах.

Иртнĕ эрне кунах хăйсен профессийĕ уявне Муркашри кирпĕч заводĕнче ĕçлекенсем те савăнăçлă лару-тăрура паллă турĕç. Район администрацийĕн пуçлăхĕпе Ю. Ивановпа район администрацийĕн ответлă ĕçченĕсем çав кун вĕсем па-тĕнче те пулчĕç. “Кирпĕч – строительство çăкăрĕ. Вăл çителĕклĕ пулсан сурт-йĕр тăвасси чарăнса лармĕ, строительство малалла кайнипе общество пурнăçĕ те пĕр вырăнта тăмĕ. Çакăн никĕсĕнче эсир тăратăр”,– терĕ кирпĕч заводĕнче ĕçлекенсене район пуçлăхĕ Ю. Иванов. Унăн сăмахĕсене çирĕплетсе дирктор çумĕ Ю. Петров (иккĕмĕш сăн ӳкерчĕкре) хастар ĕçченсене Хисеп грамотисемпе, парнесемпе чысларĕ, умри тĕллевсемпе паллаштарчĕ.

Мĕнех, пĕрлехи ĕмĕтсем пĕрле пурнăçа кĕччĕр. Уяв



ячĕпе иртнĕ çак пĕчĕк пухурах Муркашри кирпĕч завочĕн малашлăхĕ пурри, ăна кунта ĕçлекенсем шанса тăни тата çĕнĕ ĕç мелĕсене пурнăçа кĕртсех пыни курăнчĕ.

**А. БЕЛОВ.**
**Сăн ӳкерчĕксем авторăн.**

Кĕрхи уй-хир ĕçĕсем пирки

# Кĕрхи çĕртмене вăхăтра пурнăçласчĕ

Вырма ĕçĕсем анлăн сарăлса пынă май, акнă тырă-пулăран уйсем тасалсах пыраççĕ. Хуçалăхсенче вырма ĕçĕсем мĕнле пынипе интересленнĕ май эпĕ çакна асăрхарăм. Комбайнерсен пурин те пĕр тĕллев – акса çитĕнтернĕ тыр-пула вăхăтра тата пысăк пахалăхпа пуçтарса илесси. Хуçалăхсен уй-хирĕсенче пулнă май çакă та айккинче юлмарĕ: тырă-пулăн тухăçĕ пур хуçалăхра та пĕр пек мар. Ăста кĕрхи çĕртме сухине вăхăтра тата пысăк пахалăхпа пĕтĕмпех пурнăçласа хăварнă, çав хуçалăхра тыр-пулăн тухăçĕ япăхах мар темелле. Ăста кĕрхи çĕртме сухине пачах та пурнăçламан е япăх пахалăхпа туса хăварнă, вăл хуçалăхсенче тыр-пулăн тухăçĕ савăнтармасть. Эпир ĕçленĕ вăхăтра (эпĕ трактор бригадине нумай çулсем ертсе пынă) ял хуçалăх енĕпе ĕçлекен ученăйсем тăтăшах çапла каланине ас тăватăп: “Кĕрхи çĕртме пулас çулхи тыр-пулăн никĕсĕ пулать, ăна вăхăтра тата пысăк пахалăхпа пурнăçласа хăвармалла”. Ученăйсем çĕртмене август уйăхĕнчех пурнăçлама сĕннĕ.

Çапла, çитес çулхи тыр-пулшăн кĕркуннех ĕçлеме тытăнмалла. Ахаллĕн... Нумай хуçалăхсен уйĕсем çум курăкпе хупланса ларнă. Çĕр улми пуссисем, иçентĕрен пăхсан, сарă сăрăпа сăрланă пек курăнса выртаççĕ. Гербицид сапсан та çум курăкĕ уйсенчен çухалмасть. Мĕншĕн çапла? Акă мĕншĕн. Кĕрхи çĕртме сухи – тыр-пулшăн питĕ кирлĕ ĕç. Ăна хуçалăхсенче пурнăçлама пăрахрĕç. Пурнăçлама та питĕ япăх пахалăхпа пурнăçлаççĕ. Плугсем çинче предплужниксем çук. Пуррисем те ячĕшĕн кăна çакăнса тăраççĕ, хăйсен ĕçне тумаççĕ. Плугсем çинче лемехĕсем мăка. Плугсене кирлĕ пек регулировка тумаççĕ. Çавсене пула ĕнтĕ курăксен вăррисемпе тымарĕсем çĕр айне тарăна пулаймаççĕ, çĕр çинех выртса юлса тепĕр çулне шăтса тухса аталанса çитĕнсе акнă тыр-пула хупласа хураççĕ, çитĕнме памаççĕ. Кунта эпĕ çакна каласшăн, ĕлĕк машинăпа трактор станцийĕсем (МТС) ĕçленĕ вăхăтра плугсем çинче предплужниксем çук пулсан е вĕсене кирлĕ пек регулировка туман тата плугсен лемехĕсем мăка пулсан, вĕсене уя сухалама кăларман. Паян манăн ыйтас килет: “Халĕ мĕншĕн çапла тумалла мар? Хуçалăх ертӳçисен, агрономсен тата инженерсен çакна лайăх пĕлмелле. Çум курăкĕ вăл – тыр-пул тăшманĕ. Вăл тухăçлă тыр-пул туса илме чăрмантарать. Малалла эпĕ çапла каласшăн: комбайнсем вырса çапнă улăма пуçтарса илсе тракторсене кĕрхи çĕртме сухине пурнăçлама уйсене халех тасатса парсан питĕ лайăх пулмалла. Паян-ыранах суха ĕçне пурнăçлама тытăнасчĕ. Тата тепĕр хут калатăп: август уйăхĕнче тунă çĕртме сухине ученăйсем ырласа пысăк хак параççĕ. Хуçалăхсен ертӳçисемпе агрономĕсене тата тĕп инженерĕсене эпĕ çапла сĕнӳ парасшăн: кĕрхи çĕртме сухалама тухакан техникăна кирлĕ пек тĕплĕн хатĕрлемелле. Плугсем çинче пурин те предплужниксем кирлĕ. Тĕп лемехĕсемпе предплужник лемехĕсем çивĕч пулмалла. Уйсенче йăрансем ан пулччăр тетпĕр пулсан, плугсене кирлĕ пек регулировка тумалла. Агрономсене уйрăмах çакна каласшăн: çĕртме сухине 25 сантиметртан ăшăх сухалас марччĕ. Паллах, çапла тусан никам та ятламĕ сире, çум курăкĕ те çухалĕ уй-хиртен.

Юлашки кунсенче кĕтнĕ çумăр çуса иртрĕ. Паллах, ку вăл питĕ аван пулăм. Çĕртме тумалли уйсенче нӳрĕк пулнипе çĕр лайăх ванса пырĕ, тракторсене ĕçлеме те йывăр пулмĕ. Сăмах май каласан, ку хаклă ĕçе тракторсем сухаланине тĕрĕслесе тăни питĕ кирлĕ. Мĕншĕн тесен çĕртме сухине япăх сухаланипе çĕр ĕç культури юлашки çулсенче чуна ыраттармаллах япăхса кайрĕ. Уйсене пăхатăн та унта та кунта çум курăкĕ алхасать.

Юлашкинчен эпĕ çапла каласшăн: “Кĕрхи çĕртме сухине – тыр-пулăшăн хаклă ĕçе – пурнăçлама çăмăл мар. Çавна шута илсе сухалакан механизаторсене хавхалантарни те питĕ кирлĕ. Ĕлĕк МТСсем ĕçленĕ вăхăтра (механизаторсем МТСсем аллинче пулнă) кĕрхи çĕртме сухине октябрь уйăхĕн 10-мĕшĕччен пĕтĕмпех пурнăçламалла пулнă. Пĕтĕмпех пурнăçланă механизаторсене ĕçленĕ ĕç кунĕ çумне 45 процент хушса тӳленĕ. Çапла вара кĕрхи çĕртме сухине çулленех пĕтĕмпех вăхăтра пысăк пахалăхпа пурнăçланă. Ун чухне уйсенче çум курăкĕ паянхи пек алхасман, тыр-пул тухăçĕ те япăх мар пулнă.

**В. ИВАНОВ.**
Кашмаш ялĕ.

Ĕç династийĕ

# Борисовсем

Чапаев ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕн Отаркăри сĕт фермине нумай çул ĕçлекен Борисовсем пирки кĕскен çапла калас килет. Татьяна Прокопьевна çак династин тĕкки. 55-мĕш çулпа пыраканскер хăйĕн ĕç ĕмĕрĕн тĕп пайне çак фермăрах иртернĕ. Малтанах ĕçе вылăх пăхакан пулса вырнаçнă хĕрарăм фермăри пĕр ĕçрен те ютшăнман: вылăх пăхнă, тислĕк кăларнă, кĕтӳ кĕтнĕ. Юлашки 20 çулта вара Татьяна Прокопьевна доярккăра вăй хурать. “Ферма ĕçĕ çăмăл мар, паллах, анчах эпĕ нихăçан та кайрисен ретĕнче пулман, Борисовсен ятне çĕре ӳкермен”,– терĕ Татьяна Прокопьевна калаçу ĕç çинче кĕрсе кайсан. Унăн ушкăнĕнче 35 ĕне. Калама кăна çăмăл, вĕсене-çке ирĕн-каçăн сумалла, таса-сывă пăхса тăмалла.

Борисовсен династийĕ терĕмĕр те асăннă фермăрах Татьяна Прокопьевнан мăшăрĕ Вениамин Борисович вуншар çул хĕлле вылăх пăхакан пулса, çулла кĕтӳçĕре вăй хунине каламасăр та иртме çук. Ашшĕпе амăшĕнчен ачисем те юлмаççĕ. Виçĕ ывăлпа пĕр хĕр ӳстереççĕ Вениамин Борисовичпа Татьяна Прокопьевна. Вĕсенчен Валерийпе Сергей – Отаркă фермине. Валерий – вылăх пăхакан, Сергей – тракторист.

Борисовсен ĕçĕпе хуçалăх ертӳçисем те, пĕрле ĕçлекенсем те кăмăллă.

**Анатолий БЕЛОВ.**

Ыйтăр – хуравлатпăр

# Пӳрт-çурт лартас тесен

***Ман кӳршĕ пӳртне ман чикĕ патнех лартрĕ. Çакă мана килĕшменрен пĕлес килет: кӳршĕпе кӳршĕ пӳрт-çурт çавăрнă çĕрте саккунлă йĕрке пур-и? Пӳрте, сарайсене кӳршĕ чиккинчен миçе метрта лартма юрать? Йывăççене, тĕмĕсене тата миçе метрта вырнаçтармалла? Хаçат урлă ответ пама ыйтатăп.***

**А.С. ТИХОНОВ.**
Кашмаш ялĕ.

Ялсенче кил-çурта кӳршĕ чиккинех кайса лартнă тĕслĕхсем час-часах тĕл пулаççĕ. Çавăнпа та вулаçă хускатнă ыйту чылайăшĕшĕн усăллă пуласса шанса эпир район архитекторĕпе Н.Ф. КОННОВПА çыхăнтăмăр. Хурав çапла пулчĕ: **“Кӳршĕпе иртекен çĕр участокĕн чиккинчен тĕп строени патне çити хушă 3 метр, хуçалăх тата ытти строенисем патне çити 1 метр, уйрăм тăракан гаражчен 1 метр пулмалла. Инçĕше чикĕрен пуçласа çуртăн тулаш енĕпе виçеççĕ”.**

Ĕç коллективĕсем валли

# Районти вылăх-чĕрлĕх отраслĕнче ĕçлекенсен 2006 çулхи экономика ăмăртăвĕн условийĕсем

Утă уйăхĕн вĕçĕнче районта пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче вылăх-чĕрлĕх отраслĕнче ĕçлекенсен иртнĕ хĕл кунĕсенчи тата кăçалхи пĕрремĕш çур çулти ĕçĕсене пĕтĕмлетсе тата малашлăх планĕсене палăртса анлă канашлу иртрĕ. Унта асăннă тапхăрта ӳсĕмлĕ ĕçленисене чысланипе пĕрлех малашне те çĕнсе илнĕ чикĕсенчен чакмасăр вăй хума хавхалантарма экономика ăмăртăвĕн условийĕсене çирĕплетрĕç. Çак йышăнăва район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю. Иванов алă пусса çирĕплетни ăмăртăва официаллă вăй парать.

Çĕр ĕçĕпе вылăх-чĕрлĕх отраслĕне пур çĕрте те эффективлă аталантарас тата ял хуçалăх производствине малалла ӳстерес тĕллевпе вылăх-чĕрлĕх отраслĕнче ĕçлекенсен экономика ăмăртăвĕн условийĕсене çапла çирĕплетнĕ. Ун тăрăх экономика ăмăртăвĕн çĕнтерӳçисене тесе çаксене йышăнаççĕ:

1.1 Çулталăк кăтартăвĕсемпе 100 гектар ял хуçалăх çĕрĕ пуçне аш-какай, сĕт туса илессипе, пĕр ĕне пуçне сĕт сăвассипе, мăйракаллă шултра вылăхсене сыснасене талăкра ӳт хуштарассипе, вылăхсене сыхласа хăварассипе чи лайăх кăтартуллă пĕр ял хуçалăх предприятийĕ, пĕр хресчен (фермер) хуçалăхĕ, килти хушма хуçалăх.

Çĕнтерӳçĕсене куçса çӳрекен вымпелпа, 1 степень дипломпа тата укçан премилеççĕ:

ял хуçалăх предприятине – 12000 тенкĕ;

хресчен (фермер) хуçалăхне –8000 тенкĕ;

килти хушма хуçалăха – 5000 тенкĕ.

1.2 Çулталăк хушшинче пĕр ĕне пуçне пуринчен ытларах сĕт суса илме пултарнă сĕт ферми.

Çĕнтерӳçĕне “2006 çулхи чи лайăх сĕт ферми” куçса çӳрекен вымпелпа, 1 степень дипломпа тата 5000 тенкĕ укçан премипе наградăлаççĕ.

1.3 Çулталăк хушшинче мăйракаллă шултра вылăхсене самăртнă çĕрте талăкри вăтам ӳт хушаслăха чи çӳллĕ шайра тытнă ферма.

Çĕнтерӳçĕне “Мăйракаллă шултра вылăх самăртассипе 2006 çулхи чи лайăх ферма” куçса çӳрекен вымпелпа, 1 степень дипломпа тата 5000 тенкĕ укçан премипе наградăлаççĕ.

1.4 Çулталăк хушшинче сыснасене самăртнă çĕрте талăкри вăтам ӳт хушаслăха чи çӳллĕ шайра тытнă тата çура илессипе пуринчен мала ӳкнĕ ферма.



***“Свобода” хуçалăх кăçалхи пĕрремĕш çур çулта 1495 центнер аш, 7714 центнер сĕт туса илнинче ( кăтартусем пĕлтĕрхи çак вăхăтринчен пысăкрах) вылăх-чĕрлĕхе вăхăтра паха апатпа тивĕçтернин тӳпи пысăк. Çакна ăнланса ĕçлеççĕ Кашмашри сĕт ферминчи вылăх пăхакансем. Кусем вĕсем: Э. Константинов, А. Анисимов, А. Кириллов. Пĕрлехи тимлĕхпе кăçал хуçалăх сĕт сăвассипе пĕрремĕш çур çулта 500 пине яхăн тенкĕ тупăш илнĕ.***

***Сăн ӳкерчĕкре: А. Анисимовпа А. Кириллов ĕç вăхăтĕнче.***

***А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.***

Çĕнтерӳçĕне “2006 çулхи чи лайăх сысна ферми” куçса çӳрекен вымпелпа, 1 степень дипломпа тата 5000 тенкĕ укçан премипе наградăлаççĕ.

1.5 Çулталăк хушшинче пĕр ĕнерен 4000 кг ытла сĕт сунă доярккăсене тивекен премисем:

4000 - 5000 кг – 400-шер тенкĕ;

5000 - 6000 кг – 600-шер тенкĕ;

6000 кг ытларах – 800-шер тенкĕ.

1.6 Машинăпа ĕне сăвакан доярккăсен тата ĕнесене искусственлă майпа пĕтĕлентерекен операторсен конкурсĕнчи çĕнтерӳçĕсене дипломсемпе укçан премии парас:

1 вырăн – 2000 тенкĕ;

2 вырăн – 1500 тенкĕ;

3 вырăн – 1000 тенкĕ.

2. Ял хуçалăхĕнчи пысăк производство кăтартăвĕсемшĕн хисеплĕ ятсем парас (вĕсем çумне диплом, çĕнтерӳçĕ ленти, 500 тенкĕ укçан премии):

2.1 “2006 çулхи машинăпа ĕне сăвакан чи лайăх оператор”.

2.2 “2006 çулхи чи лайăх техник-осеменатор”.

2.3 “2006 çулхи чи лайăх зоотехник”.

2.4 “2006 çулхи чи лайăх ветработник”.

2.5 “Сысна самăртассипе ĕçлекен 2006 çулхи чи лайăх оператор”.

2.6 “2006 çулхи чи лайăх пăру пăхакан”.

2.7 “Мăйракаллă шултра вылăх самăртассипе ĕçлекен 2006 çулхи чи лайăх оператор”.

2.8 “2006 çулхи чăх-чĕп пăхакан чи лайăх оператор”.

2.9 “2006 çулхи чи лайăх конюх”.

2.10 “2006 çулхи чи лайăх сурăх пăхакан”.

2.11 “2006 çулхи чи лайăх ферма заведующийĕ”.

2.12 “2006 çулхи чи лайăх утарçă”.

3. Пĕтĕмлетӳсем тунă чух тĕп кăтартусене çаксене шутлас: ĕç тухăçлăхĕ, пахалăхпа конкуренцилĕх, ресурссене перекетлени, çĕнĕ технологисемпе малта пыракан опыта анлăн пурнăça кĕртни, сывă та хăрушсăр ĕç условийĕсем туни, производствăра çын вилнĕ тĕслĕхсем пулманни, тавралăха сыхлас мероприятисене пăхăнса пыни, ĕçлекенсен ĕç тупăшне ӳстерни, ĕç укçипе парăм çукки, производствăн пысăк эффективлăхĕпе рентабельлĕхĕ, продукци калăпăшне иртнĕ çулпа танлаштарни.

4. Вылăх-чĕрлĕх отраслĕнчи экономика ăмăртăвне хĕл каçнине тишкернĕ чух пĕтĕмлетес, отчетлă çул хыççăнхи пĕрремĕш кварталта çулталăк кăтартăвĕсемпе Хисеп грамотисем, дипломсемпе вымпелсем, çĕнтерӳçĕ лентисемпе укçан премисем парас.